26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
ОКТЯБРЬ
6
ЮНКУН
199(6436) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Ĕçсынни депутачĕсен райсовет исполкомĕсем тата ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, уборка вăхăтĕнче тухăçлăн тата лайăх ĕçленĕшĕн, государствăна тырă парса татнăшăн ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çак колхозсене кĕртнĕ:

22. Комсомольски районри **«Трактор» колхоз** (колхоз председателĕ **Иванова** юлташ). Колхоз тĕштырăсене 15 ĕç кунĕнче вырса пĕтернĕ. Кĕлтесене капана хывса тата авăн çапса пĕтернĕ. Сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне пахча-çимĕçсене тата техникăлла культурăсене пухса кĕртнĕ. Государствăна тырă парса татнă.

23. Комсомольски районри **«Красный Октябрь» колхоз** (колхоз председателĕ **Акчурин** юлташ). Ку колхоз тĕштырăсене кĕске срокра тата пĕр тăккаламасăр вырса пĕтернĕ. Кĕлтесене капана хывса, авăн çапса пĕтернĕ. Государствăна тырă парса татнă.

24. Комсомольски районри **«Искра» колхоз** (колхоз председателĕ **Вахитов** юлташ). Колхоз тĕштырăсене 15 ĕç кунĕнче вырса пĕтернĕ. Сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне кĕлтесене капана хывса тата авăн çапса пĕтернĕ. Государствăна тырă парса татнă. Пахча-çимĕçсемпе техникăлла культурăсене пухса кĕртнĕ.

25. Комсомольски районри Сĕнтĕр ялсоветĕнчи **«Искра» колхоз** (колхоз председателĕ **Квасов** юлташ). Колхоз тĕштырăсене кĕске срокра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртнĕ. Кĕлтесене капана хывса тата авăн çапса пĕтернĕ. Государствăна тырă парса татнă.

Чугун çул транспортне хĕле лайăх хатĕрлер

Пирĕн çĕршыври чугун çул транспорчĕн работникĕсем фронтпа халăх хуçалăхĕн ыйтăвĕсене тивĕçтерсе пырассишĕн хăйсен вăйне шеллемесĕр ĕçлеççĕ. Отечественнăй аслă вăрçăн малтанхи кунĕсенчех вĕсем вăрçă материалĕсене хăвăрт турттарассине организацилерĕç. Вĕсем вăрçă хăрушлăхĕ пулнă районсенчи ĕççыннисене тата промышленноçа хĕвелтухăçне куçарас ĕçĕн йывăрлăхне тӳссе ирттерчĕç. Нумай ĕçлерĕç тата ĕçлеççĕ те чугун çул работникĕсем. Анчах вĕсен умĕнче малашне тата та пысăк задачăсем тăраççĕ. Вăрçă пĕтмен-ха, нимĕç захватчикĕсене çапса аркатмашкăн хамăрăн мухтавлă Хĕрлĕ Çара мĕн кирлисене парса пыма пирĕн тата та хастартарах ĕçлемелле. Чугун çул работникĕсен тивĕçĕ—фронтпа халăх хуçалăхĕн ыйтăвĕсене лайăхрах пурнăçа кĕртесси пулать.

Нумай пулмасть, ССР Союзĕн Верховный Совет Президиумĕ чугун çул работникĕсене уйрăм званисем парасси тата уйрăмăнах палăрнă работниксене наградăлама кăкăр çине çакса çӳремелли значексем тăвасси çинчен указсем кăларчĕ. Çаксем ĕнтĕ чугун çул работникĕсене пур чухне те фронтри пек ĕçлеме хушаççĕ.

Халĕ чугун çул работникĕсемшĕн ответлă тапхăр — хĕллехи кунсем çывхарса килеççĕ. Хĕллехи вăхăтра, çанталăк условийĕсене пула, чугун çул ĕçĕнче чылай йывăрлăхсем пулаççĕ. Вăл йывăрлăхсене сирсе пырса, хĕллехи вăхăтра та тухăçлăн ĕçлемешкĕн тĕплĕн хатĕрленес пулать. Паровозсемпе вагонсен тата чугун çул хуçалăхĕнче ремонт ĕçне пĕтĕмпех туса çитермелле, службă тата пурăнмалли çуртсене юсаса ăшăтмалла, топливăпа хĕлле ĕçлеме кирлĕ инструментсене хатĕрлемелле.

Хĕллене хатĕрленес тĕлĕшпе чугун çул транспорчĕнчи чылай коллективсем пысăк тимлĕхпе ĕçлеççĕ. Улатăрти паровозсем юсакан заводри цехсенчен чылайĕшĕсем хĕле хатĕрленсе çитни çинчен паспортсем илнĕ. Шупашкар дистанцийи чугун çула отлично тытса усрать. Трак, Алтышево станцисен коллективĕсем хĕллене хатĕрленес енĕпе нумай ĕçсене пурнăçа кĕртсе çитернĕ. Анчах вĕсен те туса çитермен ĕçсем сахал мар. Шупашкар дистанцинче, сăмахран, хĕлле кирлĕ инструментсем çитмеççĕ. Канаш станцинче те хатĕрленӳ ĕçĕсем çителĕксĕр пыраççĕ-ха.

Предприятисенче заводри транспорта хĕллене хатĕрлесси кирлĕ пек пулса пымасть.

Хĕллене хатĕрленес тĕлĕшпе çак çывăх кунсенчех нумай ĕçсене пурнăça кĕртмелле. Вăл ĕçсене чугун çул работникĕсем хăйсен вăйĕпех пурнăçлама ĕлкĕреймеççĕ. Çакна шута илсе, ВКП(б) Обкомĕ чугун çул транспортне хĕллене хатĕрленме пулăшас тĕлĕшпе октябрĕн 5-мĕшĕпе 16-мĕшĕ хушшинче вунăкунлăх ирттерме йышăнчĕ. Вунăкунлăхра чугун çул работникĕсен тата вĕсен çемьисен, чугун çул çывăхĕнчи район центрĕсемпе хуласенчи служащисен, колхозниксен вăйĕпе хĕллене хатĕрленес ĕçсене пĕтĕмпех пурнăça кĕртсе çитермелле. Çакна тума пирĕн мĕн кирлисем пурте пур, вунăкунлăха лайăх организацилесе ирттерни кăна кирлĕ.

ВКП(б) Обкомĕ Шупашкар, Канаш, Улатăр горкомĕсен секретарĕсене тата чугун çул çывăхĕнчи Шупашкар, Ишлей, Çĕрпӳ, Красноармейски, Шăхасан, Канаш, Вăрмар, Куславкка, Йĕпреç, Вăрнар, Çĕмĕрле райкомĕсен секретарĕсене чугун çул транспортне хĕллене хатĕрленме пулăшас тĕлĕшпе иртекен вунăкунлăха куллен ертсе пыма хушрĕ. Партипе совет организацисен колхозниксемпе колхозницăсене тата служащисене çак ĕçе анлăн явăçтармалла тăвас пулать. Чугун çул çинче ĕçлеме тухакансем хушшинче социализмлă ăмăрту организацилемелле, тухăçлăн ĕçлеме условисем туса памалла.

Вунăкунлăхра чугун çул работникĕсем умĕнче пысăк задачăсем тăраççĕ. Вĕсен чугун çул çинче ĕçлеме тухакансем валли ĕç инструменчĕсем кирлĕ таран тупса памалла, пĕтĕм ĕçе лайăх организацилеме тăрăшмалла тата техника тĕлĕшпе ертсе пымалла. Çаксене тума малта пыракан рабочисемпе инженерла-техникла работниксене явăçтарас пулать.

Партипе совет тата комсомол организацийĕсем, çавăн пекех чугун çул работникĕсем пурте çине тăрса ĕçлесен, эпир республикăри чугун çулсене хĕле тĕплĕн хатĕрлеме пултаратпăр. Çакна пирĕн тумалла, вара чугун çул транспорчĕ хĕллехи вăхăтра та фронтпа халăх хуçалăх ыйтăвĕсене ăнăçлăн тивĕçтерсе пырĕ.

Республикăри ĕççыннисем Социализмлă Ĕç Геройĕсене саламлаççĕ

Республикăри ĕççыннисем ССР Союзĕн Верховный Совет Президиумĕ В. М. Молотов, Л. П. Берия, Г. М. Маленков, А. И. Микоян, И. Т. Тевосян, П. И. Коробов тата В. В. Вахрушев юлташсене Социализмлă Ĕç Геройĕн ятне парасси çинчен кăларнă указсене тулли кăмелпе кĕтсе илчĕç. Предприятисемпе промартельсенче тата колхозсенче пулса иртекен пухусемпе митингсенче рабочисемпе служащисем тата колхозниксемпе колхозницăсем Социализмлă Ĕç Геройĕсем тăван çĕршыва Хĕрлĕ Çар вăй-хăватне тĕреклетнĕ çĕре нумай вăй-хăват хурине палăртаççĕ.

Предприятисенчи рабочисем Социализмлă Ĕç Геройĕсене ĕçре çитĕнӳсем тунипе саламлаççĕ. Челноков юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводра ĕнер рабочисемпе служащисен тата инженерла-техникла работниксен митингĕ пулса иртрĕ. Митингра стахановец-орденоносец Голубчиков юлташ Социализмлă Ĕç Геройĕсене хăй кулленхи нормăна 200 процент ытларах тултарнипе саламлани çинчен пĕлтерчĕ. Завод коллективĕ геройсене саламласа фронта пулăшассишĕн тата та тимлĕрех ĕçлеме сăмах пачĕ.

В. М. Молотов, Л. П. Берия, Г. М. Маленков тата ытти юлташсене Социализмлă Ĕç Геройĕсен ятне панă май Елчĕк районĕнчи «Марс», «КИМ» колхозсенче пухусем пулса иртнĕ. Пухусенче колхозниксемпе колхозницăсем Социализмлă Ĕç Геройĕсене чĕререн саламласа, ялхуçалăх ĕçĕсене хăвăртрах вĕçлеме, государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçа кĕртессине васкатма йышăннă.

ЯЛХУÇАЛĂХ ĔÇĔСЕНЕ ВĔÇЛЕМЕЛЛИ ФРОНТОВОЙ УЙĂХЛĂХ

Коммунистсем ертсе пыракан колхозсем малта

КАЛИНИНО, октябрĕн 5-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Ялхуçалăх ĕçĕсене хăвăртрах вĕçлессишĕн фронтри пек ĕçлемелли уйăхлăхра уйрăмах коммунистсем ертсе пыракан колхозсем лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. «Клевер» колхоз (председателĕ парти членĕн кандидачĕ Е. Васильев юлташ) октябрĕн 1-мĕшне ялхуçалăх ĕçĕсене пĕтĕмĕшпех вĕçлерĕ. 332 гектар çинчен пухса кĕнĕ тырра кĕске срокра çапса пĕтерчĕ. Çавăн пекех пахча-çимĕçсене те вăхăтра кăларчĕ.

Колхозăн кăçал тырпул анса пулнă. Уйрăм участоксенче, сăмахран, 32 гектарлă участокра кашни гектартан 20-шер центнер сурхи тулă тухнă. Октябрĕн 1-мĕшне колхоз государство умĕнчи парăмсене пĕтĕмĕшпех татрĕ, Хĕрлĕ Çар боецĕсен сывлăхне сыхламалли фонда 1075 литр сĕт пачĕ.

Ялхуçалăх ĕçĕсене хăвăртрах вĕçлессишĕн Мăн Явăшри Ленин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕнчи коммунистсем те хĕрӳллĕн ĕçлеççĕ. Колхоз председателĕ А. Емельянов тата пуçламĕш парторганизаци секретарĕ Мазенцев юлташсем авăн çапнă çĕрте хăйсем те ĕçлеççĕ. Колхоз, кунĕн çĕрĕн ĕçлесе, кĕсех авăн çапса пĕтерет.

Çавăн пекех Услапари «Броневик» колхоз (председателĕ коммунист Федоров) октябрĕн 3-мĕшне ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлерĕ. Кунсăр пуçне выльăхсем валли ăшă витесем хатĕрлерĕ. 30 пуç тиха валли çĕнĕ вите туса пĕтерчĕ, ферма çурчĕн стенисене тăмпа шуратрĕ.

Киров ячĕпе тăракан колхоз килес çуракине те хатĕрленме тытăнчĕ. Вăрлăх фончĕсене хывса çитерчĕ. Уйăхлăх вăхăтĕнче унти колхозниксем вăрлăхсене сортласа пĕтерме тăрăшаççĕ. Ялхуçалăх машинисене пĕр çĕре пухса хунă, вĕсене ремонтлама тытăннă. Ку тĕлĕшпе тимĕрçĕ Волков тăрăшса ĕçлет. Халĕ вăл плугсен пĕр пайне юсанă та ĕнтĕ.

Е. ВОРОБЬЕВ.

Комсомолецсен ăмăртури çитĕнĕвĕсем

Сталин юлташа чи малтан рапорт пама право илессишĕн пуçланнă социализмлă ăмăртура мала тухас тесе, комсомолăн пирĕн районри пуçламĕш организацийĕсем чылайĕшĕсем хастаррăн ĕçлеççĕ. Комсомолăн «Волонтер» колхозри организацийĕнчи комсомолецсем уйхир ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлессишĕн пĕтĕм вăйĕсене хучĕç. Тырă вырнă вăхăтра комсомолка О. Трофимова ертсе пыракан 1-мĕш бригада чи малта пычĕ. Тырпула ытти бригадăсенчен малтан пуçтарса кĕртрĕ. Комсомолка Ильина тата союзра тăман çамрăк хĕрача Скворцова кĕрепленлĕ çавапа 0,50—0,55-шер гектар çулса пынă.

Районри комсомолецсенчен уборкăра 78 çын машинистсем, 149 çын агитаторсем, 182 çын стена хаçачĕсен редакторĕсем пулса ĕçлерĕç. Халĕ те вĕсем авăн ĕçлеççĕ. Комсомолецсем колхозниксем хушшинче тĕрлĕ ыйтусемпе 90 доклад тунă. Районĕпе пурĕ 805 комсомолец уйхирте пĕр таталмасăр ĕçлерĕç. Хирпуç, Пăртас, Кольцовка, Çĕн Алтăш колхозĕсенчи комсомолецсем кĕлте турттарса капана хывнă чухне тăкаксемпе кĕрешес тесе комсомолецсенчен постсем тунă. Пучахсем пухас тĕлĕшпе Упнерти, Кивĕ Яххакассинчи шкул ачисемпе пионерсен отрячĕсем питĕ лайăх ĕçленĕ. Уйрăмăнах Вăрнарти вăтам шкулта вĕренекенсем, учительница-комсомолка Белоусова юлташ ертсе пынипе, «Апнер» колхозра ĕçлесе 624 ĕçкунĕ тунă. Кашни вĕренекен ача 15 ĕçкунĕнчен пуçласа 45 ĕçкунĕ таран илнĕ.

Авăн çапнă çĕрте 13 колхозра комсомолецсемпе çамрăксен сменисем ĕçлеççĕ. «Победа» колхозри комсомолецсемпе çамрăксен смени «БДО» молотилкăпа пĕр смена хушшинче 180 центнер, Вăрман Шăхаль колхозĕнчи комсомолецсемпе çамрăксен сменинчи 14 çын 4 лаша вăйлă молотилкăпа сменăра 9,9-шар тонна тырă çапнă. Кунашкал тĕслĕхсем районра татах та пур.

Государствăна тырă тăратас тĕлĕшпе ĕçлекен транспорт бригадисене 86 комсомолец хутшăннă. Кунсăр пуçне комсомолецсем воскресник туса 150 тонна тырă леçнĕ.

Районри комсомолецсем ялхуçалăх ĕçĕсене активлă хутшăнса, çуракинче пысăк çитĕнӳсем тунăшăн ВЛКСМ Центральный Комитечĕ комсомолăн районри организацине Хисеплĕ грамота парса наградăларĕ.

Хальхи вăхăтра комсомол организацийĕсем комсомол 25 çул тултарнă уява кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Выставкăсем тăваççĕ.

А. БЕЛЯЕВ,
ВЛКСМ Вăрнар райкомĕн секретарĕ.

Малта пыракан колхозсенчен пример илсе ĕçлер

Ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлемелли фронтовой уйăхлăх пуçланнăранпа Ишлей районĕнчи чылай колхозсенче ĕç тухăçлăхĕ ӳсрĕ. Хăймалакасси ялсоветĕнчи тăвата колхозран виççĕшĕ авăн çапса пĕтерчĕç. Ярабайкасси ялсоветĕнчи «Мировой Октябрь» колхоз, малтан кая юлса пычĕ пулсан, халĕ, фронтовой уйăхлăха активлăн хутшăннă хыççăн, ялхуçалăх ĕçĕсен хăвăртлăхне нумай ӳстерчĕ. Колхозăн икĕ молотилка ĕçлемесĕр ларнă. Халĕ вĕсене иккĕшне те юсанă, вĕсемпе кунĕн-çĕрĕнех авăн çапаççĕ. Машинист Миронов юлташ ĕç нормине куллен 120 процент тултарса ĕçлет. Колхоз авăн çапмалли графика кулленех пурнăçласа пырать.

Свердлов ячĕпе тăракан колхоз 1943-мĕш ялхуçалăх çулĕнчи ĕçсене пĕтĕмпех вĕçлерĕ. 1944-мĕш çулта акма вăрлăх фончĕ хывса хучĕ. Вăрлăхлăх клевера тирпейлĕн çапса пухрĕ, кантăрсене татса шыва хутрĕ. Хальхи вăхăтра ку колхозра выльăх-чĕрлĕх витисене юсаççĕ. Витесене лайăхрах юсас, ăшатас тĕлĕшпе бригадăсем ăмăртса ĕçлеççĕ.

«Пархикасси» колхоз çак кунсенче государствăна 1944-мĕш çулшăн ашкакай парса татрĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана вĕсем кăçал çĕр процентпех тултарнă. Сыснасем валли йĕкел пухма колхоз ятарласа бригада организациленĕ.

Октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне Ишлей районĕнчи колхозсем çĕрулми кăларса пĕтерчĕç. Паянхи куна 22 колхоз авăн çапса пĕтернĕ. Нумай колхозсенче ялхуçалăх ĕçĕсене хăвăртрах вĕçлессишĕн кĕрешӳ вăйлăн сарăлса пырать, колхозниксен ĕçлес хастарлăхĕ пысăк. Анчах юлса пыракан колхозсем те пур-ха.

Акă, илĕпĕр Мăналти Калинин ячĕпе тăракан колхозах. Ялхуçалăх ĕçĕсене кая юлмасăр туса пыма ку колхозăн вăй çителĕклĕ. Анчах колхоз правленийĕ ĕçсене ӳрĕк-сӳрĕк ертсе пырать, ĕç дисциплинине пăсакансемпе кĕрешмеççĕ. Колхоз ку тарана çитсе те государствăна пахча-çимĕç пĕр центнер та паман, çавăн пекех тырă парасси те япăх пулса пырать. Кĕрхи çĕртме тума тытăнман. Колхоз председателĕ М. Шорнов ĕç япăх пынăшăн пăшăрханмасть. Ĕç кунĕ кунта кăнтăрла çитсессĕн çеç пуçланать, хăшпĕр колхозниксем ĕçе пачах тухмаççĕ.

Отočево ялсоветĕнчи колхозсенче те çаплах. Государствăна тырă парас ĕç вăраха юлса пырать. Авăн çапмалли графика пурнăçа кĕртсе пымаççĕ.

Районри партипе совет организацийĕсен юлса пыракан колхозсенче вăйлăрах ĕçлемелле. Ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлес ĕçре колхозсемпе ялсовет исполкомĕсен председателĕсен ответлăхне ӳстермелле. Ялхуçалăх ĕçĕсемпе кая юлнă колхозсем кăçал пирĕн районра пачах ан пулччăр. Фронтовой уйăхлăхра кашни колхозах уборка ĕçĕсене чыслăн туса пĕтертĕр.

В. ГУСЬКОВ

Çĕрулми кăларса пĕтерчĕç

СĔНТĔР. Ярославка ялсоветĕнчи «Первая борозда» колхоз (председателĕ Антонов юлташ) тырăсене тăккаламасăр пухса кĕртрĕ. Кĕрхи тырăсене кĕске вăхăтра акса хăварчĕ. Йышлă тырра тăккаламасăр капана хывса лартнă хыççăн колхозниксем халĕ хĕрсех авăн çапаççĕ. Хăшпĕр культурăсене, тĕслĕхрен, тулла, пăрçана, вире, çапса пуçтарнă.

«Первая борозда» колхоз государствăна тырă районра пуринчен малтан парса татрĕ. Колхозниксем пурте пĕр шухăшлă пулса, çак ответлă ĕçе вăхăтра пурнăçлама тăрăшрĕç.

Авăна хăвăрт çапса пынипе пĕрлех, колхоз çĕрулми кăларас ĕçе те лайăх организацилерĕ. Çĕрулмине кăларса пынă май государствăна парсах пычĕç. Халĕ колхоз коопторгпа селыпо договорĕсене пурнăçа кĕртсе çĕрулми парать.

З. СЕМЕНЧУК.

Армансене юсамалла

ЕЛЧĔК. Çĕнĕ Пăвари «Сатурн» колхозăн виçĕ çилармане пур. Анчах вĕсем пĕри те тырă авăртма юрăхлă мар, çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ. Колхоз хăй тыррине урăх армансенче авăртать. Çавăн пирки ытлашши укçа тенкĕ тăккалать. Çапла июль уйăхĕнче 3 пин тенкĕ ытла укçа расходланă. Анчах хăйĕн арманĕсене юсама тăрăшмасть.

В. НАУМОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Октябрĕн 4-мĕшĕнчи оперативнăй сводка

Октябрĕн 4-мĕшĕнче пирĕн çарсем ГОМЕЛЬ, МОГИЛЕВ тата ВИТЕБСК енĕсенчи уйрăм участоксенче, тĕллĕн-тĕллĕн çапăçса, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă.

Ытти фронтсенче вăйлă разведка тунă тата тăшмана хирĕç артиллери персе тăнă.

Октябрĕн 3-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 67 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 53 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Гомель енче пĕр соединени чаçĕсем тăшманăн çичĕ контратакине сирсе янă, нимĕç пехотине пĕр полка çити пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн хăй тĕллĕн çӳрекен темиçе туппине персе çĕмĕрнĕ, трофейăсем тытса илнĕ. Вĕсен шутĕнче 5 хир туппи тата 4 бронетранспортер пур. Тепĕр участокра Силецкий лейтенант ертсе пыракан автоматчиксен ушкăнĕ пĕр юхан шыв урлă каçнă та, хăяхсем хушшипе куçса пырса, тăшман флангне пырса тухнă. Сасартăк пырса çапса, автоматчиксем çав юханшыв хĕрринче çирĕпленсе тăнă нимĕçсене аркатса тăкнă, çапла вара пирĕн подразделенисене юханшыв урлă каçма май панă.

Пирĕн авиаци пĕр çĕре пухăнса тăнă тăшман çарĕсене пыра-пыра çапнă. Нимĕçсен 10 танкне, 40 туппине тата çар грузĕсем турттарса пыракан 100 автомашинине ытла пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ.

* * *

Могилев енче пирĕн çарсем уйрăм участоксенче хăйсен позицийĕсене лайăхлатасшăн çапăçнă. Тăшман хаяр контратакăсем тăвать, хăй йышăнса тăракан рубежсене темĕнле пулсан та хăй аллинчех хăварма тăрăшать. Пĕр соединени вăйлăн çапăçса нимĕçсем хирĕç тănине çĕмĕрсе тăкнă та темиçе тĕреклетнĕ пункта тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 400 вилли ытла вырта юлнă. Икĕ кун хушши пынă çапăçусенче тăшманăн 20 туппине пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Витебск енче пирĕн çарсем тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă. Пĕр участокра пĕр соединени чаçĕсем нимĕçсем туса тултарнă чăрмавсене çĕмĕрсе тăкнă та, малалла куçса, халăх пурăнакан 3 пункта тытса илнĕ. Çав пунктсемшĕн çапăçнă чухне нимĕçсен 300 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн çарсем тăшманăн темиçе хаяр контратакине сирсе янă. Трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Хура тинĕс флотĕн авиацийĕ тăшманăн десант турттарса çӳрекен 2 баржине тата типĕ грузсем турттарса çӳрекен 4 баржине шыва путарнă. Тата, унсăр пуçне, пирĕн авиаци çар грузĕсем турттарса пыракан 100 автомашинăна ытла çĕмĕрсе тăкнă. Гитлеровецсене пĕр батальона çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Житомир облаçĕ урлă каякан чугун çул участокне нимĕçсем вăйлăн сыхласа тăнă. Çав çул çинчи кашни километра 30—40 гитлеровец хурал йыттисемпе пĕрле сыхласа тăнă. Участок тăрăх вăхăчĕ-вăхăчĕпе бронепоезд каллă-маллă çӳренĕ. Тăшман çав тери сыхă тăнă пулин те, Житомир облаçĕнче кĕрешекен пĕр отрядри партизансем сентябрĕн 14-мĕшĕнчен пуçласа 17-мĕшне çитиччен çав участокра нимĕçсен 6 çар эшелонне сирпĕнтерсе янă, фронталла боеприпассем, тупăсем тата танксем турттарса пыракан темиçе вунă вагона пĕтерсе тăкнă. Крушенисем вăхăтĕнче нимĕçсен 300 салтакĕпе офицерĕ ытла вилсе пĕтнĕ.

* * *

Нимĕçсен 216-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 396-мĕш полкри пĕр батальонăн тыткăна лекнĕ командирĕ майор Вернер Вихерт çапла каласа кăтартнă: «Пирĕн дивизи юлашки вăхăтра питĕ йывăр çухатусем тӳсрĕ. Темĕн чухлĕ салтак вилсе е аманса пĕтрĕ. Пуринчен те ытларах командирсем пĕтрĕç. Пĕр уйăх хушшинче пĕр батальонра пур рота командирĕсене те вĕлерчĕç. Нимĕç çарĕсен çуллахи наступленийĕ пăчланса ларни, унтан каялла чакма пуçлани салтаксемпе офицерсен вăрçăри шухăш кăмăлĕсене пăсса пăрахрĕ. Халĕ ĕнтĕ офицерсем нимĕç командованийĕн уйрăм йăнăшĕсем çинчен кăна каламаççĕ, вĕсем вырăссен стратегийĕ нимĕç стратегийĕнчен нумай лайăхраххи çинчен калаçаççĕ. Дивизири эпĕ пĕлекен офицерсем Германия çĕнтересси çинчен халĕ калаçмалли те çук ĕнтĕ тесе шутлаççĕ. Маншăн хамшăн та çакă паллă: Германин çак вăхăтри йывăр лару-тăрăвĕ тĕрлĕ енчен 1918 çула астутарса тăрать. Халĕ пĕтĕм ыйту çакăн пек тăрать: хальхи кризис хăçан вĕçне çити çивĕчленсе кайĕ, нимĕç çарĕ хăçанччен тӳссе тăма пултарĕ».

* * *

Аялтарах нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Мариуполь хулинче тунă тискер ĕçсем çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «Икĕ çул хушши гитлеровецсем Мариуполь хулинчи мирлĕ халăха темĕн тĕрлĕ асап кăтартрĕç, хулана ишсе çĕмĕрсе пĕтерчĕç. Фашистла ирсĕрсем совет çыннисене тискеррĕн асаплантарасси, хулана варварсем пек ишсе çĕмĕресси Мариуполь хулине оккупациленĕ малтанхи кунах пуçланчĕç те нимĕç захватчикĕсем тарса кайиччененех пычĕ. Оккупаци вăхăтĕнче гитлерла палачсем хулари темиçе вунă пин мирлĕ çынна персе пăрахрĕç. Асаплантарса пĕтернĕ темиçе пин совет гражданне агрономи базийĕ районĕнчи танксемпе кĕрешме алтнă шăтăка тата окопсене, çавăн пекех тата Хрещатинское ялĕ районĕнчи агрономи базипатĕнчи окопсене пытарчĕç. Фашистла ирсĕрсем Ильич ячĕпе тăракан заводри мартен цехĕн начальникĕн помощникне, УССР Верховный Совечĕн депутатне Пузырев юлташа тата унăн икĕ хĕрне, заводри чи вăтă рабочисене—Шабанова, Пузачена тата ыттисене те нумайĕшне персе пăрахрĕç. Нимĕç бандичĕсем Азовсталĕн, Ильич ячĕпе тăракан тата Куйбышев ячĕпе тăракан чи пысăк заводсен цехĕсене, вырăнти промышленноçăн йышлă предприятийĕсене, электростанцине, трамвай паркне, 2 водолечебницăна, канмалли 10 çурта сирпĕнтерсе ячĕç. Хула совечĕн çуртне, банка, судпа прокуратура çуртне, почтăпа телеграфа, театра тата хулари 56 шкул çуртне сирпĕнтерсе ячĕç. Нимĕçсем çавăн пекех тата хулари пур чиркӳсене те сирпĕнтерсе ячĕç. Гитлеровецсем хулари пурăнмалли нумай çурта вĕсенче пурăнакан çынсемпе пĕрлех çунтарса ячĕç».

Акт çине алă пуснă: хула совечĕн председателĕн ĕçĕсене туса тăракан Л. Литвинов, Ильич ячĕпе тăракан заводри рабочисемпе работницăсем тата специалистсем — К. Гольдина, П. Поликурлат, инженер П. Фещенко, машинист С. Ториков, токарь П. Шаповаленко, машинист М. Батычко, цех начальникĕ А. З. Орлов, цех начальникĕ А. Орехов, инвалид И. Домашнев, почта начальникĕ А. Стеблянко, физкультура инструкторĕ А. Машкин, трамвай техноракĕ Н. Смирнов, Мариуполь порт станцийĕн составителĕ И. Голубь, врач В. Кононова, педагогика училищинчи преподаватель С. Попов тата ыттисем те.

Комсомол 25 çул тултарас умĕн

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Телефонпа). Комсомолăн Мускав, Тамбов, Курск тата ытти областсенчи организацийĕсем ВЛКСМ 25 çул тултарнă ятпа стахановла вахта пуçласа ячĕç. Вĕсем ялхуçалăх ĕçĕсене хăвăртрах вĕçлессишĕн ăмăртăва тухрĕç.

Çак пуçару пирĕн районри комсомолецсемпе çамрăксем хушшинче те анлăн саралчĕ. Нумай колхозсенчи комсомол организацийĕсем, уяв умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, фронта пулăшассине вăйлатрĕç, колхозсен уйхирĕсенчи тырпула пĕр тăккаламасăр пухса кĕртес ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартрĕç. Уйрăмах «Янмурзино», «Малалла», «Трактор», «Маяк», «Новая сила» колхозсенчи комсомол организацийĕсем лайăх ĕçленине палăртмалла.

Комсомолецсем государствăна тырă парас тĕлĕшпе те ырми-канми ĕçлеççĕ. Комсомол организацийĕсем пуçарса пынипе, сентябрь уйăхĕнче вăçĕ хутчен воскресник туса иртернĕ, хатĕрлев пунктне хĕрлĕ обозсемпе 4.145 центнер тырă леçнĕ.

ВЛКСМ райкомĕн çак кунсенче пулса иртнĕ пленумĕ, хăшпĕр комсомол организацийĕсем çителĕксĕр ĕçленине шута илсе, ВЛКСМ райкомĕн вĕсене тивĕçлипе пулăшу пама кирлине палăртса хăварчĕ. Комсомол 25 çул тултарнă уява комсомол организацийĕсен ĕçĕсене лайăхлатнипе, ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçленипе кĕтсе илме пулчĕ.

Н. СКВОРЦОВ,
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

* * *

Шупашкарти тир-сăран комбинатĕнчи комсомолецсемпе çамрăксем ВЛКСМ 25 çул тултарнă уява ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илеççĕ. Комсомолка М. Бурмистрова юлташ начальник пулса ĕçлекен цехра комсомолецсемпе çамрăксен бригадине организациленĕ. Вăл бригада октябрĕн 29-мĕшĕччен тата ун хыççăн та производство планне 150 процент тултарса пыма сăмах пачĕ. Авксентьев, Богданов тата ытти комсомолецсем те нормăна 146—165-шер процент тултарса ĕçлеççĕ.

Çамрăк рабочисем, производствăра стахановла ĕçленипе пĕрлех, хăйсен политикăллă пĕлĕвне ÿстерес тĕлĕшпе те тăрăшса ĕçлеççĕ. Цех начальникĕ М. Бурмистрова юлташ ертсе пынипе, бригадăри комсомолецсем Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» ятлă кĕнекине хăрпăрхăй тĕллĕн вĕренеççĕ. Халĕ вĕсем 3-мĕш темăна вĕренме тытăннă.

Ку бригадăн примерлă ĕçĕсене комбинатри ытти çамрăк рабочисем те часах йышăнса илчĕç. Хатĕрлев цехĕнче ĕçлекен Цайдина юлташ нормăна куллен 120 процент тултарса пырать.

Стахановла ĕçлекен çамрăк рабочисем хушшинче ленинла-сталинла комсомол ретне кĕрекенсен йышĕ ÿссех пырать. Çак кунсенче комсомола 14 çамрăк кĕчĕç.

С. ФЛОТСКИЙ,
ВЛКСМ комитечĕн секретарĕ.

Фронтовиксен çырăвĕсем

1. Тăшманшăн ырă кун çук

Эпĕ ирсĕр тăшмансене пĕр канăçа пĕлмесĕр çĕмĕретĕп. Тăшманшăн ырă кун çук. Сехри хăпнă тăшман, хăйĕн юлашки вăйĕсене пухса, вăрă-хурахла çĕнĕ ĕçсем тăвасшăн. Çук, вăл ăна пурнăçа кĕртеймĕ. Вăл вырăс çĕрĕнче хăйне валли ĕмĕрлĕхех çĕрсе выртма виç аршăн çĕр шырать.

Акă эпĕ хамăн подразделенипе малти линире. Хура юнлă гитлеровецсем разведка тума шутларĕç. Пирĕн боецсем тăшмана пĕтерсе тăкма яланах хатĕр тăраççĕ. Тăшман малти линири пралук карта патне сывхараспа эпир автоматсенчен вутхĕм тăкма пуçларăмăр. Вĕсем килессе килчĕç те, каялла кайма çул тупаймарĕç.

Эпир Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказне чыслăн пурнăçа кĕртетпĕр. Тăван колхозниксемпе колхозницăсем, Эсир те Сталин юлташăн приказне пурнăçлассишĕн — тăван çĕршывпа фронт валли тырпул, аш-какай, пахча çимĕç йĕркеллĕ парса тăрассишĕн ырми-канми ĕçлĕр.

Ефрейтор Д. КАЛУГИН.

2. Фашистла Германие çĕмĕрсе тăкас вăхăт инçе юлмарĕ

Совет халăхĕ икĕ çулталăк ытла ĕнтĕ фашистла вăрă-хурахсене хирĕç кĕрешет. Мухтавлă Хĕрлĕ Çар ретĕнче тăшмана хирĕç кĕрешсе эпĕ виçĕ хутчен амантăм, каллех фронта кайрăм. Нимĕçсене хирĕç юлашки юн тумламĕ юлмиччен кĕрешетĕп.

Кашни çапăçу умĕнех эпĕ çакна аса илетĕп: тăван çĕршыв тата юратнă атте-аннем мана, çĕршывшăн йывăр вăхăт килсе тухсан, тăван çĕршыва хÿтĕлеме çирĕп наказ парса ячĕç. Эпĕ ку наказа чыслăн пурнăçлама тăрăшатăп.

Хĕрлĕ Çар малалла куçса пырать. Фашистла Германие çапса çĕмĕрес вăхăт инçе юлмарĕ. Кĕçех эпир те тăван килсене таврăнатпăр, каллех мирлĕ те савăнăçлă пурнăçпа пурăнма пуçлăпăр.

Анчах халĕ тăшмана тĕппипех аркатса тăкман-ха. Эпир, сирĕн ывăлăрсем тата сирĕн юлташăрсем, сире Хĕрлĕ Çара мĕнпур вăйпа пулăшса тăма хушатпăр. Государство умĕнчи парăмсене йĕркеллĕ пурнăçа кĕртсе пырăр. Колхозри ĕçлеме пултаракан пĕр çын та ĕçрен пăрăнса юлни ан пултăр. Ватти-вĕтти мĕнĕпех ирсĕр тăшмана çĕмĕрсе тăкма çĕкленĕр.

Н. ОСИПОВ.

3. Чăваш комсомолецĕн ятне çÿлте тытатăп

Мана Чăваш комсомолĕ пăхса çитĕнтерчĕ. Эпĕ 1940 çулта Хĕрлĕ Çар ретне тăтăм. Мирлĕ вăхăтра вăрçă ĕçне çине тăрса вĕрентĕм. Мана вăра «Отличник РККА» значокпа наградăларĕç.

Вăрçăн малтанхи кунĕнчен пуçласах эпĕ фронта кайрăм. Унтанпа эпĕ чылай нимĕçе «леш тĕнчене» ăсатрăм.

Эпĕ пĕр гранатăпа 9 фрица пĕтертĕм. Ку ĕç акă мĕнле пулчĕ. Хĕлле. Манăн взвода «чĕлхе» тупма приказ пачĕç. Эпĕ, 16 красноармееца илсе, разведкăна кайрăм. Вăрмантан тухсан 225—300 метр хушши хырăмпа шуса тăшман окопĕсем патне çывхартăмăр. Пĕр отделени тăшман траншейине сылтăм енчен кĕчĕ, эпĕ 8 салтакпа карнă пралука касса малалла çĕмĕрсе кĕтĕм. Çак вăхăтра нимĕç часовойĕ пире сисрĕ те пеме пуçларĕ Сылтăм енчен кĕнĕ отделени командирĕ аслă сержант Сухинин ăна часах штыкпа чиксе пăрахрĕ. Землянкăран нимĕçсем тухма тытăнчĕç. Вĕсем землянка алăкне уçсанах эпĕ пĕр граната ывăтрăм та 9 нимĕçе пĕтерсе тăкрăм.

Эпир документсемпе пăшалĕсене илсе каялла тухма тытăннăччĕ. Анчах юнашар дзотсенчен пеме пуçларĕç. Мана тата тепĕр красноармееца амантрĕç. Ку нимех те мар, çакă хытă кÿрентерчĕ: 10 нимĕçрен пĕр «чĕлхе» те илсе килеймерĕмĕр, мĕншĕн тесен граната вĕсене пурне те шаккаса пăрахрĕ.

Пире, 13 çынна, 22 нимĕçе хирĕç кĕрешме те тĕл килчĕ. Тăшман оборони умĕнче эпир минăсем лартрăмăр. Çак вăхăтра çурçĕр енчен нимĕçсен 22 разведчикĕ килсе тухрĕç. Çакна сиссенех эпĕ çапăçăва хатĕрленме команда патăм. Лайăх маскировка тунипе нимĕçсем пире курмарĕç. Вĕсен офицерĕ салтакĕсене лупашкана илсе анчĕ, тем мăкăртатма пуçларĕç. Вĕсем пирĕнтен 200 метрта çеç. Эпир нумай каласса тăмарăмăр. Кĕçех виçĕ фриц, тепĕр офицер çĕре йăванчĕç. Кăшкăру, арпашу пуçланчĕ. Пĕр отделение эпĕ тăшмана сулахай енчен çаврăнса илме хушрăм. Нимĕçсем аманнă юлташĕсене пăрахсах тарма тытăнчĕç. Вĕсене тарнă чухне «леш тĕнчене» ăсатма ытла та меллĕ. Татах иккĕшне персе ÿкертĕмĕр. Эпир хамăра панă задание пурнăçласа, пĕр çухату тумасăр чăçа таврăнтăмăр.

Кунсăр пуçне эпĕ хам пĕччен тытăнкăран тарма пикеннĕ 26 нимĕçе дивизи штабне илсе пытăм. Çак ĕçсемшĕн мана правительство «За отвагу» медаль пачĕ. Кĕçех унпа юнашар «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденĕ çуталса тăрĕ. Командовани мана иккĕмĕш хут награда илме тăратнă.

Хальхи татăклă çапăçусенче те нимĕç вăрă-хурахĕсене хирĕç мĕнпур вăйпа паттăрлăха хурса кĕрешме сăмах паратăп. Эпĕ чăваш комсомолецĕн ятне çÿлте тытатăп. Эсир те, Чăваш республикин комсомолецĕсемпе комсомолкисем, çĕнтерÿшĕн мухтава тивĕçлĕ ĕçлĕр.

Аслă лейтенант А. МЕДВЕДЕВ.

СТАХАНОВКĂСЕМ

Вĕсем тулли пурнăçпа савăнса пурăннă. Юрлама, ташлама юратнă. Техникумран вĕренсе тухсан, малалла вĕренме ĕмĕтленнĕ.

Кĕтмен çĕртен вăрçăн йывăр кунĕсем килсе тухнă. Çак кунсенче вара Маруся Филиппова час-часах шутлама пуçланă. Кам та пулин мĕн çинчен шутлатăн тесе ыйтсан, вăл: «Завода производствăра ĕçлеме каяс килет, манăн ĕçе фронт туйтăр...» тесе ответленĕ.

Халĕ вăл заводра ĕçлет. Ĕçлеме тытăнсанах ăна йывăр пек туйăннă. Анчах вăл йывăрлăхсенчен хăраман, хăйне алла илсе, темиçе кунтанах полировочнăй станок умне тăнă. 20 кун кирлĕ пулнă ăна çав станокпа ĕçлеме вĕренсе çитме. Ун хыççăн вара вăл пĕччен ĕçлеме тытăннă.

Тепĕр уйăхран завода унăн йăмăкĕ Лиза пынă. Вăл та çав станокпах ĕçлеме пуçланă. Çапла ÿссе çирĕпленнĕ пĕр тăван Филипповăсен бригади. Вĕсен бригади пĕтĕм заводра мала тухнă фронтовой бригада шутланать. Бригада умĕнчи кăтарту хăми çине вăл ĕç нормине 300 процент ытла тултарни çинчен çырса хунă.

Çак çитĕнĕвĕн историйĕ вăрăм мар, вăл пуриншĕн те паллă. Хĕрачасем Марусяпа Лиза ĕçе юратма, кирлĕ чухне вăя шеллемесĕр ĕçлеме пĕлеççĕ. Ĕç пуçланас умĕн ĕçре кирлĕ материалсене малтан хатĕрлесе хурасси вĕсен йăлине кĕнĕ. Вĕсем ĕç вăхăчĕпе туллин усă кураççĕ. Хĕрсен çепĕç аллисем кашни минутăра кирлĕ ĕç тăваççĕ. Пĕр тăвансем ĕçри чăрмавсене куллен пĕтерсе пыраççĕ.

Халĕ пĕртăван Филипповăсен фронтовой бригади пĕтĕм республикăри предприятисенчи лайăх ĕçлекен бригадăсенчен пĕри. Сентябрĕн 24-мĕшĕнче вăл бригадăна ВЛКСМ Обкомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне панă. Маруся Филиппова Хĕрлĕ ялав илнĕ чухне çапла каларĕ:

— Çитĕнÿсене эпир вăя шеллемесĕр ĕçленипе турăмăр. Шутлăр-ха хăвăрах, фронтри боецсем пирĕнтен нумайрах йывăрлăхсем тÿсеççĕ. Çакна аса илни пире ывăннă чухне те çĕнĕ вăй парать, çакна аса илни пире Хĕрлĕ ялава хамăр алăрах тытса тăма вăй-хăват кÿрет.

Вăрçă кунĕсем иртĕç. Анчах пĕртăван Марусяпа Лиза фронта пулăшассишĕн пĕтĕм вăй-хăвата хурса ĕçлени асран каймĕ.

Е. ОГОРОДНИКОВА.

Хĕрлĕ Çар боецĕсене— ăшă тумтирсем

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. (Хамăр корр.). Юлашки вăхăтра чылай колхозсенче Хĕрлĕ Çар воинĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕç вăйланчĕ.

«Свет» колхозра кĕске вăхăт хушшинчех 12 килограмм çăм, 4 мăшăр алшиш, 5 мăшăр носки пухса районри склада хывнă. «Правда» колхозра 20 килограмм çăм тата 6 мăшăр алшиш-носкисем пухнă.

«Труженик», «Большевик», Коминтерн ячĕпе тăракан колхозсенче те фронтовиксем валли вуншар мăшăр ăшă носкисемпе алшишсем, темиçе килограмм çăм пухнă.

Х. ЛИСИН.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ. Хĕрлĕ Çарăн Сывлăш-çар вăйĕсен ретĕсенче французсен «Нормандия» эскадрильин летчикĕсем хăюллă кĕрешеççĕ. СССР Верховный Совет Президиумĕ «Нормандия» эскадрильйăн офицерĕсене 1-мĕш тата 2-мĕш степенлĕ Отечественнăй вăрçă орденĕсемпе наградăланă. **Ÿкерчĕк çинче:** «Нормандия» эскадрильйăри летчиксем совет летчикĕсемпе калаçса тăраççĕ.

Е. КАПЛАНСКИЙ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Ют çĕршывсенче

Америка журналĕ Хĕрлĕ Çар çĕнтерсе пынин сăлтавĕсем çинчен

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). «Форейн Афферс» журналăн октябрьти номерĕнче Америка журналисчĕн Леланд Стоун Хĕрлĕ Çар çинчен çырнă статьине пичетленĕ.

«Хĕрлĕ Çарăн чăн хăватне халĕ ĕнтĕ пĕтĕм тĕнче пĕлчĕ»,—тесе çырать Стоу.

Америка журналисчĕ «ертсе пырас ĕçе чи çÿлтен пуçласа чи аяла çитиччен пите лайăх туса пынине» палăртать. Çав ĕçе питĕ йышлă тата опытлă офицерсем туса пыраççĕ. Хĕрлĕ Çар лайăх хатĕрленнĕ, унăн çыннисем чăтăмлă, савăрăнăçуллă, ĕçлеме пултаракан çынсем.

Стоу вырăссен «питĕ хăватлă та тĕл перекен артиллерине», Германин механизированнăй дивизийĕсемпе çапăçас ĕçре пысăк вырăн йышăннăскере, пысăк хак парать. Вăл Совет Союзĕ танксемпе чи лайăх йышши самолетсем тăвас ĕçре тунă çитĕнÿсене те палăртать.

Вăл çапла калать: Хĕрлĕ Çарăн кашни салтакĕ лайăх тумланнă, лайăх хĕçпăшалланнă. Çак тĕлĕшпе вăл вырăссен пĕрремĕш çарĕ пулса тăрать. Тата вăл пĕтĕмпе тенĕ пекех хут пĕлекен салтаксенчен тăракан пĕрремĕш вырăс çарĕ пулса тăрать, тет.

Турци хаçачĕсем гитлерла пропагандăн хăтланăвĕсенчен куласçĕ

СТАМБУЛ, октябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Турцире тухакан чылай хаçатсем («Танин», «Ени Сабах», «Тан»), Совет Союзĕпе Германи фронтĕнчи ĕçсем çинчен каласа, Германи çарĕ каялла чакнине гитлерла пропаганда тĕрĕсе кăларма хăтланнинчен кулаççĕ. Вĕсем çапла калаççĕ: гитлерла çарсем каялла чакнин «секречĕ» вăл—вĕсене Хĕрлĕ Çар пыра-пыра çапни пулса тăрать, теççĕ. «Ени Сабах» хаçат çапла калать: гитлерла пропаганда хуйса калани тăнлă-пуçлă çынна улталама пултараймасть, «мĕншĕн тесен çĕнтерÿллĕ нимĕнле çар та хăйĕн темиçе миллион çыннин пурнăçне пĕтерсе хурса туртса илнĕ пуян территорисенчен нихăçан та хăйĕн ирĕкĕпе тухса кайман», тет. Хĕвелтухăç фронтĕнче ĕçсем тĕрĕссипе çапла тăраççĕ: «Хĕрлĕ Çар нимĕç çарĕсене хăваласа пырать, хăйĕн территорине оккупантсенчен тасатса пырать», тет вăл.

Германире „пăйкăшакансене" тата „кăмăлсарсене" хаярран тыткалаççĕ

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). «Поммерше цейтунг» ятлă гитлерла хаçат Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче ĕçсем мĕнле пыни çинчен статья пичетлесе кăларнă.

«Хĕвелтухăç фронтĕнчи ĕçсене пула, темиçе уйăх каялла вăрçа пурне те хутшăнтармалла текен принцип кăларса тăратнăччĕ,—тесе çырать хаçат.—Çакна ларуттăру çивĕчленнĕ пирки тунăччĕ. Анчах та çак çулталăк хушшинче ĕçсем тата ытларах çивĕчленсе кайрĕç. Германи войскисем хĕвелтухăçĕнче хальхи вăхăтра, паллах ĕнтĕ, тăшман вăйлăн хĕссе пынине пула каялла чакаççĕ».

Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче Германи çарĕшĕн хăрушă условисем килсе тухнă пирки гитлеровецсем хăраса ÿкнине хаçат пытармасть.

Гитлеровецсен «Националь цейтунг» ятлă тепĕр хаçачĕ те çавăн пекех çырать. Вăл Хĕрлĕ Çарăн вăйĕсене çителĕклĕ хак паманшăн тата Германин фрончĕ тĕреклине шанса тăни ахалех пулнăшăн ÿкĕнет.

ЖЕНЕВА, октябрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Швейцарире тухакан «Националь цейтунг» Германирен килнĕ çырăва пичетленĕ. Унта çапла каланă: Гиммлера шалти ĕçсен министрĕ вырăнне лартнăранпа Германире террор çав тери вăйланса кайрĕ, тенĕ.

Гиммлер палăртса хунă хăрушă ĕçсене çав тери хаярран пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Халăх пухăнакан мĕнпур вырăнсенче тата магазинсенче ахаль çын тумтирне тăхăннă полицейскисем йышлăн çÿреççĕ. Вĕсем çынсемпе, пуринчен ытла хĕрарăмсемпе, провокацилле калаçма тытăнаççĕ те кăмăлсăр пулса калаçакансене пурне те тытса илсе каяççĕ. Пур поездсенче те çавăн пек шпионла ĕçлеççĕ. Гестапо урамсенче çынсене хупăрла-хупăрла илет.

Поражени тÿсес шухăш-кăмăллă çынсене асаплантарса вĕлересси куллен хиех ĕç пулса тăчĕ. Гиммлер кăтартса панă тăрăх, гитлерла хаçатсем «пăйкăшакансемпе» «ĕненменнисене» хытă хăратса çыраççĕ.

Гестапо çавăн пек хăтланнине пула, Германи халăхĕ халь обществăллă вырăнсенче чĕнмесĕр çÿрет, палламан çынсем умĕнче вăрçă çинчен, çĕршыври ĕçсем çинчен тата ытти ĕçсем çинчен те калаçма хăрать.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, октябрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин бомбардировочнăй авиаци самолечĕсем октябрĕн 4-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Касселе хаярран тапăннă. Англин 24 бомбардировщикĕ хăйсен базисене таврăнман.

Октябрĕн 3-мĕшĕнче кăнтăрла Америка бомбардировщикĕсем Франци, Бельги тата Голланди çинче активлă операцисем тунă. Çав операцисене Англин темиçе çĕр бомбардировщикĕпе истребителĕсем хутшăннă. Унсăр пуçне, доминионсен тата союзниксен авиацийĕн самолечĕсем те пулнă.

Лондонра çапла пĕлтерчĕ: паян ирпе Америкăн «Вĕçекен крепость» йышши самолечĕсем Франкфурта тапăннă, тенĕ.

Корсика çинчи вăрçă

ФРАНЦИ ÇАРĔСЕМ БАСТИЯ ХУЛИНЕ ТЫТСА ИЛНĔ

ЛОНДОН, октябрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: паян Франци çарĕсем Бастия хулине кĕчĕç. Пĕлтерÿре уйрăмăнах çапла хушса каланă: çак факт вăл Корсика çинче нимĕçсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнине пĕлтерет пулĕ, тенĕ.

ХРОНИКА

СССР Верховный Совет Президиумĕ Александр Ефремович Богомолов юлташа Французсен нацине ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен Комитет çумĕнче ССР Союзĕн Полномочнăй Представителĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Укçапа япаласен виççĕмĕш лотерейи

Тăван Хĕрлĕ Çар хĕвеланăçнелле çĕнтерÿллĕн тапăнса пыни совет халăхне тулли кăмăлпа савăнтарать. Совет халăхĕ, Хĕрлĕ Çар тунă çитĕнÿсемпе хавасланса, фронта мĕн кирлине пурне те парассишĕн вăйхăвата шеллемесĕр ĕçлет, вăрçă вăхăтĕнчи расходсене витме укçа-тенкĕ татти-сыхлисĕр парса тăрать. Ĕççыннисем вăрçă расхочĕсене витме укçа-тенкĕ пухас ĕçе мĕн таран активлăн хутшăннине эпир Государствăн иккĕмĕш военнăй заемне çав тери хăвăртăн саралнинчен те уççăн курататпăр. Вăл заема пĕр талăк хушшинче 14 миллиард та 561 миллион тенкĕлĕх сарнă. Пирĕн республикăра та заема сарасси пысăк хăвăртлăхла пулса иртрĕ. Заем тухнă кунах республикăри ĕççыннисем ăна 118 миллион тенкĕлĕх çырăнса илчĕç, заем укçине 64 миллион тенкĕ çийĕнчех тÿлерĕç.

Укçапа япаласен иккĕмĕш лотерейин билечĕсене сарасси те ăнăçлăн иртрĕ. Пирĕн республикăри ĕççыннисем лотерея билечĕсене 12 миллион та 400 пин тенкĕлĕх сарас вырăнне, кĕске вăхăтрах 16 миллион тенкĕлĕх сарнă. Çĕршер колхозниксем, рабочисемпе служащисем лотерея билечĕсене пиншер тенкĕлĕх е ытларах туянчĕç. Канаш районĕнчи Чапаев ячĕпе тăракан колхоз членĕсем укçапа япаласен иккĕмĕш лотерейин билечĕсене сутма тытăннă кунах вăл билетсене 4.240 тенкĕлĕх илнĕ те укçине çийĕнчех тÿленĕ. Çав районри Калинин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем лотерея билечĕсене 2—3 пин тенкĕлĕх илсе, укçине çийĕнчех хывнă. Çавăн пекех Вăрмар районĕнчи «Дружба» колхоз членĕсем те малтанхи кунах лотерея билечĕсем илме 40 пин тенкĕлĕх çырăннă, укçине çийĕнчех хывнă. Канашри вагон-сем юсакан заводри вăтам шкулти учительсемпе вĕренекенсем лотерея билечĕсене 12.200 тенкĕлĕх илнĕ. Кун пек примерсене вĕçĕмсĕр илсе кăтартма пулать.

Укçапа япаласен лотерейи ĕççыннисемшĕн питех те усăллă пулса тăрать. Лотерея билечĕсене туянакансем выляв-сем нумай илме пултараççĕ. Çапла укçапа япаласен иккĕмĕш лотерейи тăрăх пирĕн республикăри ĕççыннисем выляв укçи пĕр миллион та 100 пин тенкĕ ытларах илнĕ. Кунсăр пуçне çĕршер ĕççыннисем темиçе пин тенкĕлĕх япаласем выляса илнĕ. Сăмахран, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Сĕнтĕрпуç ялĕнчи колхозница Миронова юлташ каракультен çĕленĕ пальто выляса илнĕ. Калас пулать, перекет кассисем лотерея билечĕсем çине выляв тухнине тĕрĕслес ĕçе тивĕçлĕн туса пымаççĕ. Çавна пула нумай вылявсене халĕ те илмен.

Отечественнăй аслă вăрçă расхочĕсене витме укçа-тенкĕ ытларах мобилизацилес шутпа ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ СССР Финанс Халăх Комиссариатне çак çулхи октябрĕн 25-мĕшĕччен пуçласа укçапа япаласен виççĕмĕш лотерейине иртерме ирĕк панă. Лотерея сумми 2.500 миллион тенкĕлĕх пулать. Лотерея билечĕ кашни 25 тенкĕ тăрать.

Укçапа япаласен виççĕмĕш лотерейин условийĕсем иккĕмĕш лотерейăн условийĕсем евĕрлех. Анчах виççĕмĕш лотерейăра выляв укçи тата выляса илмелли япаласен хисепĕ пысăкрах пулать. Лотерейăра 2.500 пин выляв, пурĕ 500 миллион тенкĕлĕх пулать. Ку хисепре 2.437.200 билета укçа тата 62.800 билета япаласем тухаççĕ. Укçа тухакан вылявсем хушшинче 200 выляв кашни 50-шар пин тенкĕлĕх, 800 выляв—кашни 25-шер пин тенкĕлĕх, 3200 выляв—кашни 10-шар пин тенкĕлĕх, 9 пин выляв—кашни 5-шер пин тенкĕлĕх, 46 пин выляв—кашни пĕрер пин тенкĕлĕх, 80 пин вылаяв—кашни 500-шер тенкĕлĕх тата 2.298.000 выляв — кашни çĕршер тенкĕлĕх пулаççĕ.

Япалаллă вылявра 12-шер пин тенкĕ тăракан каракультен çĕленĕ 400 хĕрарăм пальтовĕ, 7-шер пин тенкĕ тăракан çăм пусмаран çĕленĕ хура хăмăр тилĕ тирĕнчен тунă çухаллă 400 хĕрарăм пальтовĕ, 4600-шер тенкĕ тăракан ылттăн тата кĕмĕл сехетсем—2000 штука, 3000-шер тенкĕ тăракан арçынпа хĕрарăм костюмĕсем—2000 мăшăр, 2850-шар тенкĕ тăракан ылттăнланă сехетсем—2000 штука, 2500-шер тенкĕ тăракан 1000 ковер, 2400-шер тенкĕ тăракан 2000 кĕмĕл сехет, хĕрарăмсемпе арçынсем валли 1500-шер тенкĕ тăракан костюм çĕлемелли пусмасем — 8000 тăрăх, 1250-шар тенкĕ тăракан хĕрарăм пальтовĕсен çухисем—2000 штука, хĕрарăм тата арçын костюмĕсем ĕçлемелли 1000-шер тенкĕ тăракан çăм пусмасем—8000 тăрăх, 1000-шер тенкĕ тăракан 2000 ковер, 900-шер тенкĕ тăракан кĕмĕлтен тунă портсигарсем—2000 штука, 500-шер тенкĕ тăракан хĕрарăм жакеткисем—15.000 штука, арçынсен 500-шер тенкĕ тăракан каракуль воротникĕсем —2000 штука, 500-шер тенкĕ тăракан тиртен çĕленĕ çĕлĕксем—1000 штука, хĕрарăмсен 500-шер тенкĕ тăракан урана тăхăнмалли япалисем—3000 мăшăр тата арçынсен урана тăхăнмалли япалисем 2000 мăшăр, 450-шар тенкĕ тăракан пурçăн япаласем—8000 тăрăх пулаççĕ.

Правительство çирĕплетнĕ тăрăх лотерея выляв 1944 çулхи февралĕн 15-мĕшĕнче пулать.

Лотерея билечĕсем тытакан çын вылявра тухнă япаласемшĕн укçан та илме пултарать.

1943 çулхи октябрĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа лотерея билечĕсене предприятисенче, учрежденисенче, колхозсенче тата перекет кассисенче илме пулать. Лотерея билечĕсен укçине çийĕнчех е тата 1944 çулхи январĕн 1-мĕшĕччен уйрăм срокесенче тÿлеме юрать. Колхозниксем билет укçисене çийĕнчех е уйрăм срокесенче колхоз бухгалтерне (счетоводне) тÿлеççĕ.

Лотерея билечĕсене сарас ĕçе предприятисемпе учрежденисенчи госкредитпа перекет кассисене пулăшакан комиссисем хăйсен уполномоченнăйĕсем урлă туса пыраççĕ. Лотерея билечĕсене сарас ĕçе 1944 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне вĕçлесе çитермелле. Çак вăхăт тĕлне лотерея билечĕсен укçине пухса пĕтермелле тата билетсене пĕтĕмпех салатса памалла.

Лотерея билечĕсене сарас ĕçе партипе комсомол тата профсоюз организацисен ертсе пымалла. Вĕсен рабочисемпе колхозниксене тата служащисене лотерея пĕлтерĕшĕ çинчен анлăн ăнлантарса памалла.

Партипе советăн вырăнти организацисем тивĕçлĕн ертсе пырсан, актива ĕçе анлăн явăçтарсан, эпир укçапа япаласен виççĕмĕш лотерейин билечĕсене хăвăрттăн тата нумай сарма пултаратпăр.

А. МИХАЙЛОВ,
ЧАССР перекет кассисемпе госкредит управлени начальникĕн заместителĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1843 Типография №1 Управления полиграф. промышленности при СНК ЧАССР, Заказ №2 Ф. 6. 53 88 п. л.